# „Вера Сарьялова“

Ҫапла ят панӑ Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Анисим Асламас хайӗн ҫӗнӗ произведенине — виҫӗ пайлӑ, прологпа эпилоглӑ оперӑна. Ку вӑл пултаруллӑ композиторӑн тӑваттӑмӗш опери. Автор ӑна Мӗтри Кипекӗн «Юрӑ ӑсти» повеҫӗ тӑрӑх ҫырнӑ (либреттине композитор К. Поляков драматургпа пӗрле тунӑ).

«Вера Сарьялова» — лирикӑлла-патриотла опера, унӑн музыкинче юрӑ формипе ҫырнӑ номерсем пысӑк вырӑн йышӑннӑ. Уйрӑм сӑнарсемпе сыхӑнна кӗвӗсенчен чи малтан тӗп героиня лейтмотивне палӑртмалла — вӑл халӑх юррине аса илтерет.

Халӑхран тухнӑ чаплӑ юрӑҫӑ, государство деятелӗ ҫинчен, совет ҫыннисен Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑри паттӑрлӑхӗ ҫинчен калать ҫак опера. Ку темӑна композитор «Вӗҫленеймен кӗвӗ» оперӑра та хускатнӑччӗ.

Ҫӗнӗ произведение ҫак кунсенче чӑваш композиторӗсен Союзӗнче пӑхса тухнӑ: опера музыкине рояльпе каласа кӑтартнӑ, юрламалли номерсемпе музыка театрӗпе филармони солисчӗсем паллаштарнӑ. Опера музыкипе либреттине сӳтсе явма композиторсем, писательсем, музыкантсемпе артистсем хутшӑннӑ. Вӗсем автора ырӑ сӗнӳсем панӑ.

Ю. ИЛЮХИН.